**Пенси ыйтăвĕсемпе**

# Çĕнĕ саккун вăя кĕрет

2009 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса страхламан хушма тапхăра страховани стажĕ шутне кĕртсе шутласа пама тытăннă май Раççей Федерацийĕн Пенси фондне федераллă бюджетран укçа-тенкĕ уйăрса пама тытăнаççĕ. Кун пирки калакан 156-ФЗ № Федераллă саккуна Раççей Президенчĕ 2008 çулхи июлĕн 22-мĕшĕнче алă пуснă. Паянхи куна страховани стажĕ шутне кĕртсе шутласа панипе çыхăннă çак тăкаксене федераллă бюджетран саплаштараççĕ: призывпа çар службинче пулнă тапхăра; ача пĕр çулталăк çурăна çитиччен пăхса усранă тапхăра, анчах та пĕтĕмĕшле тапхăр 3 çултан иртмелле мар.

2009 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен – саккун вăя кĕрекен кунран тытăнса ĕç пенсийĕн страхланă пайне палăртма страховани стажĕ шутне страхламан çак тапхăрсене кĕртме палăртнă:

– призывпа çар службинче пулнă тапхăра;
– ача пĕр çулталăк çурăна çитиччен пăхса усранă тапхăра, анчах та пĕтĕмĕшле тапхăр 3 çултан иртмелле мар;
– ĕçлеме пултаракан çын 1-мĕш ушкăн инвалидне, инвалид-ачана е 80 çула çитнĕ ватă çынна пăхса пурăннă тапхăра;
– енчен те упăшки контрактпа çар службинче пулсан, мăшăрĕ унпа пĕрле пулнă май служба вырăнĕнче вăл ĕçе вырнаçма май тупаймасть пулсан, пĕрле пулнă тапхăра, анчах та ку вăхăт пĕтĕмĕшле 5 çултан ытла пулмалла мар;
– мăшăрĕсене Раççей Федерацийĕн (СССР) ют çĕр-шывсенчи консул учрежденийĕсене, дипломати тата ытти яланлăх представительствăсене янă пулсан, вĕсемпе пĕрле пурăннă тапхăра, анчах та ку вăхăт пĕтĕмĕшле 5 çултан ытла пулмалла мар.

Асăннă тапхăрсене страховани стажĕ шутне кĕртсе шутласа пама тытăннă май унччен палăртнă ĕç пенсийĕсене çĕнĕрен шутласа парасси ( енчен те вĕсене 2001 çулхи декабрĕн 17-мĕшĕнче йышăннă 173-ФЗ № Федераллă саккунăн 30-мĕш статйипе килĕшӳллĕн пенси прависене хакланă чухне шута илмен пулсан) çапла вара çитес çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçăнать. Çавна валли гражданинăн 2009 çулта заявлени çырса памалла. 2009 çул иртсен вара заявлени çырса панă уйăх хыççăнхи уйăхăн 1-мĕш числинчен тытăнса ĕç пенсийĕн страхланă пайне çĕнĕрен шутласа параççĕ.

**Е. АЛЕКСАНДРОВА,**
**РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн пуçлăхĕ.**

**Çу кунĕсенче**

# Пуканесен выставкипе паллашрĕç

Ачасемшĕн çуллахи каникул кунĕсем сисĕнмесĕрех иртсе кайрĕç. Çу кунĕсенче ачасем кăмăл туличчен вылярĕç, шыва кĕчĕç, вăрмана кăмпа-çырла пуçтарма çӳрерĕç.

Çав вăхăтрах ял библиотекине кĕнеке-журнал вулама, тĕрлĕрен кино-мультфильм пăхма пыракансем те сахал мар пулчĕç. Библиотека ертӳçи те кĕнекепе туслă ачасене парне тума шутларĕ. Пирĕн республикăна Пермь облаçĕнчен килнĕ «Пермьский хоровод» пĕтĕм тĕнчери пуканесен выставкипе паллашма шутларĕç. Пуканесен выставки хамăр район территорийĕнче вырнаçнă «Алый парус» кану лагерĕнче пулнă май, пире унта лагерь ертӳçи Москакасси ял тăрăхĕн депутачĕ Венера Петровна Анимова йыхравларĕ. Вăл пулăшнипе ĕнтĕ кĕнекепе туслисен ушкăнĕ лагере çитме пултарчĕ.



Мĕнле кăна пукане çук пулĕ кунта! Пуканесене Пермь облаçĕнче пурăнакан 200 наци çыннине сăнласа тунă. Унта 27 пин чăваш çынни пурăннине пĕлтĕмĕр. Тĕрлĕ-тĕрлĕ наци пуканисене тытса куртăмăр. Пуканесене тĕрлĕ пусмаран Пермьри ача-пăча центрĕнчи кружока çӳрекенсем хатĕрленĕ. Ун чухлĕ пукане пĕрле пулнине курман ачасен тĕлĕнмелли нумай пулчĕ. Пуканесемпе тата тĕрлĕ халăх историйĕпе «Алый парус» лагерь ертӳçи тĕплĕн паллаштарчĕ.

Библиотекăна çӳрекен ачасем лагерьти выставкăран каялла савăк кăмăлпа таврăнчĕç. Çакăн пек интереслĕ похода кайма татах кăмăл пуррине пĕлтерчĕç вĕсем.

**Р. СИБЯКОВА,**
**Москакасси ялĕнчи библиотека библиотекарĕ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: Венера Петровна Анимова ачасене пуканесемпе паллаштарать.**

**Тава тивĕçлĕ çынсем çинчен**

# Нумай çул пурăнма ырлăх-сывлăх сунтăмăр

***Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнче Клавдия Степановна Кочанова пурăнать. Ĕмĕрĕпех фельдшер пулса ĕçлерĕ. Халĕ тивĕçлĕ канура ĕнтĕ, питех тухса çӳреймест. Ăна ывăлĕ Владимир Валентинович Кочанов пăхса пурăнать. Сĕнтĕртен мăнукĕсем те килсех тăраççĕ. Ăна лайăх пăхни хăйне курсанах паллă: сăн-питрен таса, тирпейлĕ, хаваслă, кăмăллă. Вăл пирĕншĕн яланах тетя Клава. Ăна ватти-вĕтти те юратса çапла чĕнет.***

***Нумаях пулмасть эпир ял-йышпа ăна 80 çул тултарнă ятпа саламлама пухăнтăмăр. Ырă та пархатарлă, канăçсăр ĕçсемшĕн ăна çак сăмахсемпе саламларăмăр:***

Фельдшерица тетя Клава,
Санитаркки Соня акка.
Ял варринче фельдшер пункчĕ,
Çурчĕ кивĕ те лутра.

Çурчĕ кивĕ пулсассăн та
Шалта хăтлă та илем,
Эмел кирлех пулмасан та
Кăмăла уçма килем.

Ялĕ пирĕн пысăк мар,
Ача йышĕ пĕчĕк мар.
Мĕн чуль ачана, ватта сыватнă
Канăç курмасăр вĕсем.

Е çĕрле, е кăнтăрла,
Çумăрлă е çил-тăман –
Çырма урлă хăвăрт каçнă,
Панă кирлĕ пулăшу.

Çапла, канăçсăр ĕçленĕ,
Ватăлатпăр, мĕн тăван.
Клава, Соня тата Лида–
Ял халăхĕшĕн чăн тăван.

Клавдия Степановна, тавтапуç,
Саламлать сире Шупуç!
Пурăнăр кăмăл туличчен,
Мĕн çĕр çула çитиччен.

**Любовь РОМАНОВА.**
**Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи Шупуç ялĕ.**

**Истори страницисем**

# Уйкас Янасал чиркĕвĕ - 120 çулта

Манран çамрăкраххисем час-часах çапла ыйтакансем пур: «Хăçан туса лартнă Уйкас Янасал чиркĕвне?», «Малтан кунти çынсем хăш чиркĕве çӳренĕ?». Архивсенчи материалсем тăрăх тата ватăрах çынсем каласа кăтартнипе çакă паллă. Пирĕн ватă-ватă маçаксемпе мамаксем, кукаçисемпе кукамайсем ĕлĕк-авал чиркӳсене Кăрмăша, Шăмата (халĕ Етĕрне районĕнчи Советски) çӳренĕ.

Шăмат чиркĕвне малтан Никольский чиркĕвĕ тесе каланă. Ăна 1749 çулта тунă. 1774 çулта, Пугачев пăлхавĕ вăхăтĕнче, çунтарса янă. Пачăшкине вĕлернĕ.

1777 çулта йывăçранах туса çĕнĕ чиркӳ хута янă. Ăна Успени Пресвятой Богородицы ят панă. Вун тăххăрмĕш ĕмĕрĕн иккĕмĕш çуррине çитиччен ку прихута Шăмат, Тинкеш, Урташ, Килтĕш, Янасал, Сăнар тăрăхĕсенчи ялсем кĕнĕ. 1884 çулта кунта çĕнĕ чиркӳ кирпĕчрен туса лартнă. Малтанхи йывăçран тунă чиркĕвне Уйкас Янасала куçарса кайнă.

Уйкас Янасалти прихута 1887 çулхи ноябрь уйăхĕнче хута янă. Ăна Çветуй Александр Невский ятне панă. Александр Александрович патша ятне панă тени те пур. Анчах ку сăмах тĕрĕс мар. Чиркĕве халăх укçипе тунă. Кашни çынран пилĕкшер тенкĕ укçа пуçтарнă. Ку чиркĕве Уйкас Янасал, Исетеркке, Тукас, Тимкасси, Купăрля, Ваçкасси, Риккушкăнь, Кĕртекасси, Апаш тăрăхĕнчен, Карман çырми, Анаткас Апаш, Хупахушкăнь, Пачкасси, Чуманкасси, Турай прихутĕнчи Çĕньял е пурĕ 550-на яхăн кил кĕнĕ.

Ку чиркĕве Н.В. Никольский профессор ашшĕ Василий Никитич Никольский тăрăшнипе тунă. Çав вăхăтра вăл Етĕрне уесне кĕрекен Шăмат вулăсне ертсе пынă. Ăна старшина тенĕ. Старшина должноçĕ хальхи район администрацийĕн пуçлăхĕн должноçĕпе танлашать. Ун чухне унта 6 пин çын ытла пурăннă. Шăмат вулăсне 46 ял кĕнĕ.

Н.В. Никольский профессор амăшĕ Агреппина Степановна вилес умĕн Николай Васильевич Никольские çапла хушса хăварнă: «Чиркӳре кĕлĕ туса тухакан çынсене ăшăнма, çĕрле канма, чиркĕве пыракан ытти çынсем валли пĕр пысăк лайăх пӳрт туса лартас пулать». Çак хушăва пурнăçласа Н.В. Никольский хушнипе çав пӳрте чиркӳ çумне Купăрляран Уйкас Янасала куçарса турттарса килсе лартнă. Уншăн кĕл тăвакансем питĕ кăмăллă пулнă, шутсăр тав тунă. Чиркӳрен инçере пурăнакансем унта каçхине çывăрма та юлма пултарнă, каннă.

Çавăн пекех Уйкас Янасал чиркĕвĕ çумĕнче прихут шкулĕ уçнă. Унта профессорăн шăллĕ Валерий Васильевич Никольский, йăмăкĕсем Елизавета, Серафима, И.Д. Никитин этнограф тата фольклорист, тĕнчипе паллă ученăй-математик И.М. Максимов, Чăваш АССР культура министрĕ пулнă И.А. Маркелов, Киевра аслă çар училищинче, Мускаври Тимирязев ячĕллĕ ял хуçалăх академийĕнче, Мускаври агропедагогика институтĕнче вĕреннĕ Н.Д. Никитин тата ытти нумай-нумай çын пĕлӳ илнĕ.

Чиркĕве кĕл тума манăн маçак Дмитрий Никитич Юрмекей те çӳренĕ. Хăйĕнпе пĕрле е ывăл ачине, е хĕр ачине илсе кайнă. Чиркӳре ялан пĕр вырăнта тăрса кĕл тунă. «Вырăнĕ мачча каштин сылтăм енче, кăшт маларах пулнă»,– тесе каласа кăтартатчĕ манăн мамак Ксения Лукинична Никитина. Хăй вăл 1874 çулта çуралнăскерччĕ.

Чиркĕвне 1886–1887 çулсенче туса лартнă. Чиркӳ йывăçран, ăшă пулнă, чиркĕвĕн тăрри (чан çакмалли) çӳллĕшĕ 10 чалăш та 2 аршăн, сарлакăшĕ 3 чалăш та 1 аршăн, çӳллĕшĕ карниз таран 3 чалăш та 1 аршăн пулнă.Чиркӳ çинче 1 чан, Иконостас, тăршшĕ 2 чалăш та 2,5 аршăн, çӳллĕшĕ 2 чалăш та 2 аршăн пулнă.

Прихута 10 ял кĕнĕ, штатра пачăшкă, псаломщик шутланса тăнă. 1936 çулта чиркĕве хупнă. 1992 çулта вара чиркӳ çĕнĕрен ĕçлеме пуçларĕ. 2001 çултан пуçласа Иоанн Данилов пачăшкă чиркӳ прихутне регистрациленĕ. 2000 çулхи январĕн 24-мĕшĕнчеппе Прихут Канашĕн председателĕ А.Я. Седлова.

1932 çулта Иван Федотова, Демьян Михайлова тата мана çак чиркӳре тĕне кĕртнĕ. Виççĕне те пĕрле пĕр чана шыва кĕртнĕ пирки мана анне Евдокия Меркурьевна, 1899 çулта çуралнăскер, каласа паратчĕ.

Уйкас Янасал чиркĕвĕнче манăн тăвансенчен З.В. Никольский (Н.В. Никольский профессор пиччĕшĕ), манăн аннен пиччĕшĕ С.М. Меркурьев тиек пулса ĕçленĕ. Тăвансенчен М.В. Никольский Етĕрне районĕнчи Шăматра священник, И.Д. Никитин Шупашкар районĕнчи Ишекре, Вăрмар районĕнчи Арапуçĕнче, паллă поэт, писатель Т.К. Кириллов Муркаш районĕнчи Очăкассинче, И.Н. Лесин Ишекре (Шупашкар районĕ), П.С. Сергеев Çулаçра (Элĕк районĕ), Петр Филатов, Сергей Григорьев Шуркассинче (Шупашкар районĕ), Петр Петрович Сергеев Татмăшра (Патăрьел районĕ), Андрей Алексеев Елчĕкре (Куславкка районĕ), Алексей Семенович Доброхотов (1809–1846 ç.ç.) тиек пулса Елчĕкре (Куславкка районĕ) т. ыт. те чиркӳсенче ĕçленĕ.

Христос тĕнне Янасал тăрăхĕнчи çынсем 1747 çулхи июнĕн 24-мĕшĕнче 273 арçын, 215 хĕрарăм, пурĕ 488 çын, Писĕпрен 64, Йӳçпанран 53, Çулавăçран 27, Килтĕшрен 47, Питĕшкассинчен 102 çын йышăннă. Христос тĕнне йышăнакансенчен ку тĕне пăрахăçланă тĕслĕхсем те пулман мар. Кĕпĕрнатăр патне ку ыйтупа çыру та янă. Уйрăмах 1884 çулта çуралнă Фекла Гаврилова манашка, фанатка-псаломщица паллă. Манăн анне ăна Хĕветли аки тесе чĕнетчĕ. Вăл 1910 çулта Юрпашри Евдокия ятлă хĕрарăмпа, Игорь Васильевич Михеев тăванĕпе, Израиле, Иерусалим хулине кайнă. Унта епле кайса килни питĕ интереслĕ. Израильте Янасал тăрăхĕнчен, Муркаш районĕнчен те урăх çын пулни çинчен эпĕ илтмен. Унăн пиччĕшĕ Ефрем Гаврилов, 1882 çулта çуралнăскер, пирĕн пата час-часах пыратчĕ. Мана, шкул ачине, Библи, Евангели кĕнекисене вулаттаратчĕ. Ун чухне эпĕ 4–5-мĕш классенче вĕреннĕ пулĕ.

Тĕне ĕненекенсенчен кулни те, вĕсене курайманни те пулнă. Иван Димитриевич Никитинăн хĕрĕ Антонина Ивановна Канашри культура училищинче вĕреннĕ. Ялти пĕр çын ун çинчен училище директорĕ патне çăхав (жалоба) çырса янă. Ăна ашшĕ пачăшкă пулнă пирки училищĕрен кăларса яма ыйтнă, вĕренме чарасшăн пулнă. Анчах училище директорĕ ăслăрах çын, малашнехине курма пĕлекенскер пулнă. Вăл Антонинăна училищĕрен кăларса яман. Кайран, вĕренсе пĕтерсен, Антонина Чăваш патшалăх драма театрĕнче, куçса çӳрекен колхоз театрĕнче артистка пулса ĕçленĕ. Темĕнле йывăр пулсан та, 5 ачине упăшкисĕр, пĕччен пăхса çитĕнтернĕ. Ашшĕ пачăшкă пулнăран Ольга Ивановнан Вятка хулинче суя документпа вĕренме тивнĕ. Аркадий Ивановичăн ашшĕнчен уйрăлмалла тесе каланă. Александра Ивановна Шăмата шкула çӳренĕ. Ял хушшипе çӳремен. Кăшкăрасран хăраса анкарти хыçĕпе утма тивнĕ.

**Н. ПАНТЕЛЕЙМОНОВ.**
**(Вĕçĕ пулать.).**

**Сăнаса пăхар-и?**

## Кĕр пуçламăшĕнчи ăшă кунсем кăçал «виçĕ сериллĕ» пулĕç

Çак кунсенчех пĕрремĕш сери пуçланчĕ. Хăвел пăхнипе тата çумăрсем чарăннипе пĕрлех чăннипех ăшă кунсем тăма тытăнчĕç. Сентябрĕн 4–9-мĕшĕсенче кăнтăрла температура 21–26 градуса çитет, каçхине 15–20 градус пулать.

Иккĕмĕш сери кăшт сулхăнрах пулма кирлĕ, çапах та çумăр çумалла мар. Сентябрĕн 11–12-мĕшĕсенче скандинави антициклонне пула çил çурçĕртен вĕрме пуçăнать, кăнтăрла сывлăш температури 8–13 градусран, каçхине вара 5–10 градусран иртмест.

Уйăх варринче, сентябрĕн 13–20-мĕшĕсенче, циклонсен атмосфера фрончĕсене пула çанталăк тӳлек пулмасть, çумăрсем çуса иртеççĕ. Кăнтăрла çавăн пекех 8–13 градус, каçхине 2–7 градус ăшă пулать. Çĕр çине пуçласа тăм ӳкет.

Кĕр пуçламăшĕнчи ăшă кунсен виççĕмĕш серийĕ сентябрĕн 21–25-мĕшĕсене тивет. Термометрсен юпи ку кунсенче каллех 18 градуса çити хăпарать.

## Çанталăк пирки
**(Сентябрĕн 6–12-мĕшĕсем)**

6.09. Пĕлĕтсĕртерех çанталăк пулать, çумăр çумалла мар. Сывлăш температури – 21–26 градус.

7.09. Вăхăт-вăхăт уяртакан çанталăк пулать, çумăр çумасть. Сывлăш температури 19–24 градуса çити хăпарать.

8.09. Вăхăт-вăхăт уяртакан çанталăк пулать, çумăр çумалла мар. Сывлăш температури 20–25 градус пулать.

9.09. Вăхăт-вăхăт уяртакан çанталăк пулмалла, çумăр çумасть. Сывлăш температури 13–18 градус пулĕ.

10.09. Çанталăк пĕлĕтлĕ пулать, çумăр çăвать. Температура 7–12 градус пулмалла.

11.09. Вăхăт-вăхăт уяртакан çанталăк пулать. Çумăр çумасть. Температура çав виçерех юлать – 7–12 градус ăшă.

12.09. Çанталăк вăхăт-вăхăт уяртать. Çумăр çумасть. Сывлăш температури – 8–13 градус ăшă.